26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАЙ 14 ЭРНЕКУН 100(6337) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Советăн мирлĕ гражданĕсене ирĕксĕрлесе нимĕçсен фашистла чуралăхне массăллăн хăваласа кайни çинчен тата çав преступленишĕн Германи влаçĕсемпе Германире совет гражданĕсене ирĕксĕр ĕçлеттерсе эксплоатацилекен уйрăм çынсем ответлă пулни çинчен

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. МОЛОТОВ юлташ янă нота

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ кăçалхи майăн 11-мĕшĕнче ССР Союзĕ дипломатиллĕ çыхăнусем тытакан çĕршывсен посолĕсемпе посланникĕсем патне çакăн пек нота янă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви хушнипе Сире çакăн çинчен пĕлтеретĕп:

Хĕрлĕ Çар 1942—1943 çулсенчи хĕллехи кампани вăхăтĕнче нимĕç оккупацинчен ирĕке кăларнă территори çинче Совет Союзĕн çар влаçĕсемпе гражданла влаçĕсем, юлашки ултă уйăх хушшинче, нимĕç влаçĕсем советăн гражданла халăхне çавтери тискеррĕн асаплантарса тискер ĕçсем тунине кăтартса паракан нумай йышлă çĕнĕ тĕслĕхсем тупса палăртрĕç. Гитлерла правительствăн тата çар командованин планĕсемпе инструкцийĕсем тăрăх, нимĕçсен фашистла влаçĕсем совет гражданĕсене пур çĕрте те çаратнă, асаплантарнă, вĕлернĕ, тыткăна лекнĕ çар çыннисене вĕлере-вĕлере пĕтернĕ, совет хулисемпе ялĕсене пĕтĕмĕшпех арката-арката тăкнă, советăн нумай çĕршер пин гражданĕсене нимĕç чуралăхне хăваласа кайнă. Нимĕç фашисчĕсем тунă тискер ĕçсен примерĕсем çинчен Совет Правительстви ютçĕршыв правительствисене пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, çав тискер ĕçсене гитлеровецсем хăйсем ура ярса пуснă çĕрте пур çĕрте те туса пынă, нимĕçсене вĕсем йышăннă территорирен хăваласа кăларичченех çав тискер ĕçсен калăпăшне туйса илме те йывăр пулнă.

Советăн чуралăха кĕртсе ӳкерне мирлĕ халăхне Германие вăйпа хăваласа кайни, тискеррĕн эксплоатацилени тата тăтăшах вĕлерсе пĕтерни нимĕçсен фашистла захватчикĕсен ирсĕр преступленийĕсен ретĕнче тата вĕсен пуслăхĕсен ĕмĕтĕнче уйрăм вырăн йышăнса тăрать. Совет Правительствин аллинчи документсем кăтартса панă тăрăх, советăн мирлĕ гражданĕсене вăйпах чуралăха хăваласа кайса, гитлерла ирсĕр банда пуринчен малтан çакăн пек тĕллев лартать: Германире ĕç вăйĕ питех те çитменлĕхне пулнине витсе хумалла тата Гитлерăн вăйлăн лучăрканнă çарĕ валли нимĕç промышленноçĕнчен çынсен резервĕсене пушатса илмелле. Нимĕçсен фашистла влаçĕсем тата совет гражданĕсене ирĕксĕр ĕçлеттерсе эксплоатацилекен Германири уйрăм çынсем нумайĕшĕ совет çыннисене темĕнле майпа та асаплантарса мăшкăлласçĕ, вĕсен этемле тивĕçлĕхне чакараççĕ тата питех те йывăр чуралла ĕçре, выçăхтарса тата тĕрлĕ асап кăтартса вĕлереççĕ.

Советăн Германие хăваласа кайнă мирлĕ гражданĕсене, чурасем туса хунăскерсене, нимĕçсем нихăçан илтмен пек тискеррĕн асаплантарни çинчен калакан çĕнĕ документсемпе фактсене Совет Правительстви пур халăхсене те пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать, çавăн пекех тата вăл мĕн пур преступленисемшĕн пурпĕрех ответ тыттармалли çинчен калама кирлĕ тесе шутлать.

I.

Советăн оккупациленĕ районĕсенчи мирлĕ халăха чуралантарасси пирки гитлерла влаçсем тунă плансемпе приказсем

Хĕрлĕ Çар çĕмĕрсе тăкнă фашистла войскăсен штабĕсенче тытса илнĕ документсем, çавăн пекех тата совет çыннисем каласа панисемпе çырса панисем, Германи салтакĕсемпе офицерĕсен тата вĕсен тăванĕсен çырăвĕсем çакна çирĕплетсе параççĕ: советăн нумай çĕршер пин гражданĕсене чурасем туса хурассине, вĕсене Германири чурасен рынокĕсенче сутăн илессине тата улăштарассине уйрăм система туса хунă, çав системăна Германи правительствин приказĕсем тата распоряженийĕсем тăрăх йĕркеленĕ.

Совет правительствин аллинчи документсенчен уççăнах курăннă тăрăх, 1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнчех ĕнтĕ Берлинра вăрттăн лару пулса иртнĕ, çав ларура рейхсмаршал Геринг хăйĕн чиновникĕсене кăтарту панă, вăл совет çыннисемпе Германири ирĕксĕр ĕçсенче усă курма хушнă. Пĕрремĕш кăтартура çапла каланă: «Вырăс рабочийĕсем хăйсен пултарулăхне вырăссен питех те пысăк индустрине тунă чухне кăтартса пачĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсемпе Германишĕн усă курмалла... Çакă вăл тивĕçлĕ влаçсемпе вăрттăн полицин ĕçĕ пулса тăрать» (Германи командованийĕн Хĕвелтухăçĕнчи хуçалăх штабĕн 1941 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче панă 42 006/41-мĕш вăрттăн циркулярĕн пĕрремĕш приложенийĕ). Çак циркулярта (приложенин иккĕмĕш уйрăмĕ) çакна палăртса хунă: советăн чурагантарнă гражданĕсемпе «пуринчен ытларах çулйĕр строительствинче, чугунçулсем тунă çĕрте, минăсене пуçтарнă çĕрте тата аэродромсем тунă çĕрте усă курмалла. Нимĕçсен строительнăй батальонĕсене (сăмахран, сывлăш-çар флотĕнчи батальонсене) салатса ямалла. Нимĕçсен квалификациллĕ рабочийĕсем çар промышленноçĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ; вĕсем çĕр чавнă çĕрте тата чул вакланă çĕрте ĕçлеме тивĕçлĕ мар, çакна тума вырăс пур».

«Вырăссемпе,—тесе кăтартса панă Геринг çав вăрттăн документра (IV-мĕш уйрăм, пункт А—4), — пуринчен малтан çак ĕçсенче усă курмалла:

сăрт-ту ĕçĕ, çулйĕр строительстви, çар промышленноçĕ (танксем, орудисем, самолетсене валли аппаратура тунă çĕрте), ялхуçалăхĕ, строительство, пысăк мастерскойсем (атă çĕлекен мастерскойсем), малтан курса тăман васкавлă ĕçсем валли ятарласа тунă командăсем».

Гитлерла ушкăн пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи элементарлă нормăсемпе правилăсене, оккупациленĕ территорисенчи гражданла халăх тĕлĕшпе усă курмалли нормăсемпе правилăсене ирсĕррĕн пăснине асăннă документра Геринг çак сăмахсемпе çирĕплетсе панă: «Вырăссен гражданла рабочийĕсемпе усă курасси,—тенĕ вăрттăн кăтартусен «Б» ятлă уйрăмĕнче,—тата вĕсене тыткаласси тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе усă курнинчен тата вĕсене тыткаланинчен нимĕнле те уйăрăлса тăмалла мар».

Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем валли нимĕç фашисчĕсем тунă этемле мар режим пуриншĕн те паллă.

Юлашкинчен, çав документрах Геринг: Германие хăваласа пынă совет çыннисене шеллемелле мар тата вĕсене кирек хăçан та чи хаяррăн тыткаламалла, тесе калама çук тискер приказ панă. Çӳлте асăннă документăн IV-мĕш уйрăмĕнчи А—7 пунктра çырнă çак приказ акă мĕнле калать: «Йĕркелĕх тытса тăрас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене йышăннă чухне пуринчен малтан хăвăрт тата çирĕп мерăсем йышăнма кирлине асра тытмалла. Çак наказанисемпе çеç усă курмалла: апатсăр хăварасси тата хирти çар сучĕ йышăннă тăрăх асаплантарса вĕлересси. Урăхла мерăсем йышăнма кирлĕ мар».

Чуралантармалли çав тери тискер программăна пурнăça кĕртме чиновниксен питех те пысăк аппаратне туса хунă. «Ĕç вăйĕпе усă курас енĕпе ĕçлекен главнăй уполномоченнăй пулма» Гитлер 1942 çулхи мартăн 21-мĕшĕнчи приказĕпа Фриц Заукель гаулейтера уйăрса лартнă. Çак уполномоченнăй 1942 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче правительствăпа çар органĕсене «ĕç вăйĕпе усă курас енĕпе ĕçлекен главнăй уполномоченнăйăн программине» питех те вăрттăн майпа ярса панă. Вăл документра çапла каланă: «советăн оккупациленĕ облаçĕсенчи çынсен резервĕсемпе пĕтĕмĕшпех усă курни питех те кирлĕ. Кирлĕ ĕç вăйне харпăрхăй ирĕкĕпе явăçтарма май килмесен, çийĕнчех мобилизацилеме е пĕччен шер обязательствăсем çине вăйпах алă пустарма тытăнмалла. Оккупациленĕ облаçсенче унччен тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе пĕрлех, пуринчен ытла совет облаçĕсенчи гражданла халăх хушшинчи квалификациллĕ рабочисемпе работницăсене, 15 çулран иртнисене, Германири ĕçре ĕçлеттерме мобилизацилени кирлĕ».

Çав «программăрах» («Задачăсем» ятлă уйрăмăн 4-мĕш пунктĕнче) Фриц Заукель çапла каланă:

«Питех те нумай ĕç тăвакан нимĕç хресчен хĕрарăмне ĕçрен чылаях хăтарас тесе, фюрер мана хĕвелтухăç облаçĕсенчен Германие сывă та çирĕп хĕрсене суйласа илсе 400—500 пин çынна илсе килме хушрĕ».

Заукель агенчĕсем ССР Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче ĕçлеме пултаракан халăха йăлтах шута илме тытăннă. Шута илнĕ гражданcене «хăйсен ирĕкĕпе» Германие ĕçлеме кайма хушнă. Анчах хăйсен ирĕкĕпе каякансем пачах та тенĕ пек тупăнман пирки, нимĕçсем вăйпа илсе каймалли мерăсем йышăнма распоряжени панă. 1942 çулхи январĕн 26-мĕшĕнчех ĕнтĕ «Германи командованийĕн Хĕвелтухăçĕнчи хуçалăх штабĕ» вăрттăн инструкцире (№ Б Р 98. 510/42) çапла хушнă:

«Хăйсен ирĕкĕпе каякансен йышĕ кĕтнĕ виçене çитмесен, приказ панă тăрăх, ĕç вăйне пухасси пынă вăхăтра чи çирĕп мерăсем йышăнас пулать».

Хăйне пăхăнакансене хĕтĕртсе, Фриц Заукель вĕсене 1942 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче (Ф А 5780.28/729) номерлĕ телеграммăпа çакăн пек приказ парать:

«Эсир ĕç вăйĕ пухассишĕн ответ тытатăр, ĕç вăйĕ пухассине пур майсемпе те васкатмалла, çав шутпа ирĕксĕр ĕçлеттерессин хаяр принципĕсемпе те усă курмалла».

Чурасемпе суту-илӳ тăвакан Заукелĕн «вербовщикĕсем», совет гражданĕсене нимĕçсен фашистла чуралăхне кĕртсе ӳкерес тесе, темĕнле майсемпе те хĕсме тăрăшнă. Оккупациллĕ влаçсем чĕннипе пыман çынсене пурăнма кирлĕ условисемсĕр тăратса хăварнă. Выçăхса çитнĕ çынсене çăкăр пама пулса вокзалсене астарса пухнă, вара вĕсене салтаксем хупăрласа илнĕ те, персе вĕлерессипе хăратса, эшелонсем çине тиенĕ. Анчах çак мерăсем те пулăшман. Вара нимĕç влаçĕсем хуласемпе ялла районсене разверсткăсем пама тытăннă, çавăн чухне кашни хулапа районăн Германие яма кирлĕ чухлĕ халăха обязательно тупса памалла пулнă. Çапла, сăмахран, Ленинград облаçĕн оккупациленĕ пайĕнчи районсене, уйрăмăнах Пожеревицы районне, Германи комендантурисен çакăн пек приказне ярса панă:

«Вулăçсен бургомистрĕсене!.. Германире ĕçлеме халиччен çынсем питех те сахал килнĕ пирки, кашни вулăсри бургомистрăн ялсенчи старостăсемпе пĕрле Германире ĕçлеме татах кашни вулăсран 15-шер е ытларах та çын тăратмалла. Сывлăх тĕлĕшĕнчен çирĕпрех тата 15 çултан пуçласа 50 çулхи çынсене тăратмалла. Çав çынсене 1942 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнчен обязательнăй йĕркепе Пожеревицăна ямалла. Пожеревицы коменданчĕ».

Совет Правительствин аллинче Харьковри СС руководителĕ çумĕнчи политикăллă полицин тата хăрушсăрлăх службин начальникĕ «1942 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 9-мĕшне çити вăхăтра Харьков хулинче лару-тăру мĕнле пулни çинчен» çырнă докладăн пĕтĕм тексчĕ пур.

«Ĕç вăйне пухасси,—тенĕ çав документра,—тивĕçлĕ учрежденисене канăçсăрлăх кӳрет, мĕншĕн тесен халăх Германире ĕçлеме ярассине питех те хирĕç тăни палăрать. Лару-тăру халĕ çакăн пек: ĕçе ярассинчен кашниех пур майсемпе те хăтăлма тăрăшать (чирлĕ пек кăтартать, вăрмансене тараççĕ, чиновниксене укçа парса çавăраççĕ т. ыт. те). Германие харпăрхăй ирĕкĕпе ярасси çинчен тахçанах ĕнтĕ сăмах та пулма пултараймасть».

Çапла ĕнтĕ, Германин официальнăй документсенчен çакă уççăнах курăнать: совет гражданĕсене нимĕç чуралăхне массăллăн хăваласа каясси тата вĕсене тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе танлаштарасси гитлерла пуçлăхсем нимĕçсен фашистла оккупациллĕ влаçĕсем умне малтанах лартнă задача пулса тăрать, çак задачăна пурнăça кĕртес тесе, оккупантсем советăн гражданла халăхне кирек мĕнле ирĕксĕрлесси умĕнче те чарăнса тăман

II.

Совет çыннисене нимĕçсен фашистла чуралăхне вăйпа хăваласа кайни

Гитлерла правительствăн тискер планĕсене пурнăça кĕртсе пырса, нимĕç влаçĕсем советăн пĕтĕм оккупациленĕ территоринчен мирлĕ совет халăхне нимĕç пусмăрлăхне массăллăн хăваласа каяссине организациленĕ, халĕ ĕнтĕ вĕсем «харпăрхăй ирĕкне» нимĕн чухлĕ те шута илме тăрăшман. Нимĕçсем тытса илнĕ совет çĕрĕ çинчи кашни хуларанах, кашни ялтанах, халăх пурăнакан кашни пунктранах фашистла вăрă-хурахсем халăхăн чылай пысăк пайне чуралăха хăваласа кайнă, хăшпĕр пысăк хуласенчен вуншар пин арçынсене, хĕрарăмсене, подростоксене тата ачасене хăваласа кайнă.

Çапла, Кривой Рогран нимĕçсем ирĕксĕрлесе 20 пин çынна ытла, Курскпа ун тавралĕнчи 9 районран 29.381 çынна, Харьковран (нимĕçсем 1942 çулхи август уйăхĕ тĕлне официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх) 32 пин çынна ытла, Мариупольрен — 60 пин çынна туртарса кайнă, Сталино хулинчен Германире ирĕксĕр ĕçлеттерме 1942 çулхи июль уйăхĕччен 101 эшелон янă пулнă. Харьков облаçĕнчи пĕр Малиновка ялĕнчен кăна гитлеровецсем нимĕç чуралăхне 820 арçынна, хĕрарăмсемпе ачасене хăваласа кайнă. Воронеж облаçĕнчи Солдатское ялĕнче гитлеровецсем таврари ялсенчен 11 пин çынна пухнă, вĕсен хушшинче хĕрарăмсем, подростоксемпе ачасем нумай пулнă; çав телейсĕр çынсем темиçе кун хушши витесенче, сарайсенче, землянкăсенче хĕсĕнсе пурăннă, нимĕç влаçĕсем вĕсене выçăхтарса асаплантарнă тата нимçта та кăларман; çакăн хыççăн вара Германие хăваласа кайнă. Ставрополь крайĕнчи Воронцово-Александровскинче гитлеровецсем хăйсем каялла чакас умĕн советăн 800 гражданинне хăваласа пухнă, вĕсене ирĕксĕрлесе Германие ăсатма шутланă, анчах Хĕрлĕ Çарăн унта пырса çитнĕ чаçĕсем мирлĕ халăха хăрушă кунçулран сăлса хăварнă.

Захватчиксенчен ирĕке кăларнă пур хуласемпе ялсенче те гражданла халăха нимĕç чуралăхне массăллăн хăваласа кайнин нумай йышлă фактчĕсене Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем тупса палăртаççĕ. Гитлерла пуçлăхсем хăйсем йышăннă тăрăх, мирлĕ пурăнакан миллионшар çынсене тыткăна илесси тата чурасем туса хурасси цивилизациллĕ халăхсен историйĕнче халиччен илтмен питĕ пысăк виçепе пулса пыни курăнать. Çапла, гитлерла сатрап, «Украина рейхскомиссарĕ» Эрих Кох çирĕплетсе панă тăрăх (унăн çырăвне 1943 çулхи январь уйăхĕнче «Дейче Украине Цейтунг» хаçатра пичетлесе кăларнă), Германие 710.000 украинеца ăсатнă». Заукель пуç пулса тăракан «ĕç вăйĕпе усă курас енĕпе ĕçлекен управлени» пĕлтернĕ тăрăх (унăн пĕлтерĕвне кăçалхи январĕн 14-мĕшĕнче «Минскер Цейтунг» хаçатра пичетлесе кăларнă), «1942 çулта хĕвелтухăçĕнче оккупациленĕ облаçсенчен Германие 2 миллион чуна яхăн ăсатнă».

Тĕрлĕ документсенчен тата Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă районсенче пурăнакансем кăтартса панисенчен курăннă тăрăх, нимĕçсен фашистла влаçĕсем уйăхран уйăхах халăхăн çĕнĕрен те çĕнĕ категорийĕсене ирĕксĕрлесе хăваласа кайнă, хăшпĕр пунктсенче вара, уйрăмăнах хăйсем каялла чакнă чухне, Германири инçетри тыла ăсатма хăйсемпе пĕрле пыма пултаракан пĕтĕм халăха пĕр çын юлмиччен хăваласа кайнă. Малтантарах гитлерла вăрă-хурахсен агенчĕсем сывлăх енĕпе çирĕпрех те чăтăмлăрах çынсене кăна, пуринчен ытла 15 çултан пуçласа 45 çула çитнисене, суйласа илме тăрăшнă пулсан, юлашки уйăхсенче вара, гитлеровецсем иттерекен «тотальнăй» (пĕтĕмĕшле) мобилизаци вăхăтĕнчи уйăхсенче, чуралăха чирлисене те, инвалидсене те хăваласа каяççĕ, çав вăхăтрах халĕ ĕнтĕ 12 çултан пуçласа 60 çула çитнисене те илеççĕ. Чуралăха хăваласа кайнă чухне çемьесене салата-салата ярaççĕ, ашшĕ-амăшĕсене ачисенчен, пиччĕшĕсене йăмăкĕсенчен, арăмĕсене упăшкисенчен уйăраççĕ. Çакăн пек садистла хаярлăх гитлеровецсен çеç пулма пултарать.

Гитлерла çынçиенсем совет çыннисене организованно вăрланă тата вĕлерсе пĕтернĕ пирки пĕтĕм хуласемпе районсем пушă тăрса юлнă. Смоленск облаçĕн Хĕрлĕ Çар нумаях пулмасть ирĕке кăларнă Гжатск районĕ тăрăх çав даннăйсем акă мĕнле курăнаççĕ: çак районра нимĕçсем оккупацилеччен 32 пин çын пурăннă, Хĕрлĕ Çар пынă тĕле унта 7 пин çурă çынна яхăн çеç юлнă, Гжатск районĕнчи ялсенчен Германие 5.419 çынна хăваласа кайнă, вĕсен шутĕнче «ĕçлеме пултаракан» 14 çулран та кĕçĕн ачасене 624 ачана илсе кайнă. Гжатск хулинче вара оккупацилеччен 13 пин çын ытла пурăннă пулсан, ăна захватчиксенчен ирĕке кăларнă кун пĕр пин çынран кăшт ытларах çеç пулнă—вĕсенчен нумайăшĕ ашшĕ-амăшĕсĕр тăратса хăварнă пĕчĕк ачасем пулнă.

Совет çыннисене нимĕç чуралăхне хăваласа кайнă чухне пур çĕрте те пекех захватчиксем совет гражданĕсене хирĕç юнлă репрессисем тăваççĕ, мĕншĕн тесен совет гражданĕсем хăйсене шыракан вăрă-хурахсенчен пытанма тăрăшаççĕ. Çапла, Гжатск хулинче нимĕçсем сборнăй пункта пыманшăн хулари мирлĕ халăха 75 çынна персе вĕлернĕ, çав çынсене сборнăй пункта комендант повестка парса Германие яма чĕннĕ пулнă. Полтавăра 1942 çулхи декабрĕн вĕçĕнче 65 çынран тăракан железнодорожниксен ушкăнне çакса вĕлермелле туса приговор йышăннă, çав çынсем Германие гитлерла каторгăна кайма килĕшмен пулнă. Оккупациллĕ влаçсем Германие каяссинчен пăрăнакан пур çынсене те партизансем тесе пĕлтереççĕ, зĕсене «закона» пăснăшăн айăпласçĕ, чурасем памалли «разверсткăна» пурнăça кĕртмен районсене карательнăй экспедицисем яраççĕ, пĕтĕм ялсене çунтара-çунтара яраççĕ тата çĕршер çынсене персе вĕлереççĕ. Белоруссири Слуцк районĕнчи ялсенче кăçалхи февралĕн вĕçĕнче Германин окружной комиссарĕ алă пуснă пĕлтерĕве çакса тухнă, çав пĕлтерӳре акă мĕнле çырнă: «1900—1927 çулсенче çуралнă çынсем пурте, арçынсем те, хĕрарăмсем те, 1943 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче 10 сехетре ирхине уездри управăна пыма тивĕçлĕ, вĕсене сывлăх енчен тĕрĕслеççĕ те Германире ĕçлеме яраççĕ. Харпăрхăйпе пĕрле тумтир, урана тăхăнмалли тата çул çинче çиме виçĕ кунлăх апат илмелле. Кам управăна пымасть — ăна бандит тесе шутлаççĕ те тивĕçлипе ответ тыттараççĕ». Белоруссири Ганцевичи районĕнче (Бароновичирен кăнтăрхĕвелтухăçнерехре) нимĕçсен карательнăй экспедицийĕ кăçалхи мартăн малтанхи кунĕсенче вуншар ялсене çунтара-çунтара янă тата, нимĕç каторгине янă çĕре пыманшăн репресси туса, çĕршер çынсене персе вĕлернĕ. Литва тата Латви ССР-ĕсенчен унта гитлеровецсем çынсене организованно ухтарса шырани çинчен пĕлтернĕччĕ, çав çынсене укреплениcем тунă çĕре ирĕксĕр ĕçлеттермешкĕн, çавăн пекех тата Германипе вăл оккупациленĕ çĕршывсене нимĕç чуралăхне ямашкăн сборнăй пунктсене хăваласа пухнă. Оборона сооруженийĕсем тунă çĕрте ĕçлеме Балтика таврашĕнчи совет республикисенче 300 пин çынна ытла мобилизациленĕ, çавăнпа пĕрлех «ĕç фрончĕ» текен списока çырăнассинчен пăрăнакансене хирĕç тата Германие янинчен пăрăнакансене хирĕç çав тери хаяр репресси тăваççĕ, чылайĕшне çакса вĕлереççĕ.

Нимĕçсем тытса илнĕ территорисенчи совет гражданĕсем нимĕç чурахуçисене тата вĕсен агенчĕсене хирĕç час-часах та организованнорах тата паттăррăн хирĕç тăма тытăнаççĕ. Прибалтикăри, Украинăри, Белоруссири районсенчен питех те йышлă пĕлтерӳсем килсе тăраççĕ, вĕсенчен курăннă тăрăх, ӳссе çитнĕ арçынсем кăна мар, тата Германие хăваласа каяссинчен пытанса пурăнакан хĕрарăмсемпе подростоксем те партизансен отрячĕсене массăллăн каяççĕ, вĕсен ретĕсене тăрса хăйсен ирĕклĕхне хӳтĕлеççĕ. Совет çыннисене нимĕç чуралăхне вăйпа хăваласа каяссине хирĕç тăнă май партизанла юхăм ӳснине Германин çар органĕсемпе полици органĕсен чылай вăрттăн донесенийĕсенче шикленсе йышăнаççĕ.

Совет çыннисене фашистла чуралăха хăваласа кайнă чухне нимĕçсем вĕсене облавăсем туса шыраççĕ, карательнăй экспедицисем организацилеççĕ, пĕтĕм районсене, хуласене хупăрласа илсе салтаксене тăратса тухаççĕ, çынсене çул çинчех ярса тытса сборнăй пунктсене хăваласа пухаççĕ. Советăн мирлĕ гражданĕсене питĕрсе лартнă вагонсенче, салтаксем е полици сыхласа тăнипе, этемле мар йывăр условисенче Германие вăйпа ăсатнине кăтартса паракан материалсем Совет Правительствин аллинче питех те нумай. Украинăн, Белоруссин тата Российăн оккупациленĕ районĕсенчен чуралантарнă çынсен эшелонĕсем кăнтăрла та çĕрле те Германие каяççĕ. Выльăхсене хупса лартнă пек кашни товарнăй вагона 60—70-шер çын тиеççĕ. Вăйсăрланса çитнĕ тата чирленĕ çынсене вагонран кăларса ывăтаççĕ, тăвайккинелле пăрахаççĕ, хĕвеланăçнелле каякан çулсене совет çыннисен виллисемпе сарса тухаççĕ.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем ирĕке кăларнă Миллерово хулинче пурăнакан Раиса Давыденко, фашистла тыткăнран тарса тухнăскер, çапла каласа парать: «Товарнăй вагонсенче питĕ сивĕччĕ тата çав тери тăварччĕ, çавăрăнкалама та май çукчĕ. Кашни вагонрах надзиратель ларса пыратчĕ, вăл кирек мĕнле ыйту çине те туяпа çапса ответлетчĕ. Çул тăршшĕпех пире выçăхтарса асаплантарчĕç...»

Курск облаçĕнчи Николаевка ялĕнчи колхозница Варвара Бохтина çапла каласа парать: «Курскра пире 50—60-шар çынна вагонсене тĕртсе кĕртрĕç. Унтан тухма ирĕк памасчĕç. Нимĕç часовойĕ пире пĕрмаях хĕнетчĕ. Льговра пире антарчĕç, кунта эпир ятарласа тунă комисси витĕр тухрăмăр. Салтаксем пăхса тăнă çĕртех пире ним юлмиччен çарамаслантарчĕç, пĕтĕм ӳтпĕве пăхса тухрĕç. Эпир Германи патнелле мĕн чухлĕ çывхарса пытăмăр, пирĕн эшелон çавăн чухлĕ пушанса пычĕ. Курскран 3 пин çынна илсе тухрĕç, анчах кашни станцире тенĕ пекех чирлисене тата выçăхса вилекен çынсене кăлара-кăлара ывăтатчĕç. Германире пире лагере хупрĕç, унта советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем пулнă. Лагерь вăрмантаччĕ, йĕри-таврах йĕплĕ пралукпа çӳллĕ карта тытса çавăрăннă. Тăватă кун иртсен, пире вырăнсем тăрăх валеçсе тухрĕç. Эпĕ, манăн йăмăк Валентина тата 13 хĕрача çар заводне лекрĕмĕр».

1942 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче Германирен тарса тухнă Владимир Петрович Велошкурский, 1924 çулта çуралнăскер, Ворошиловград облаçĕнчи Верхне-Теплянски районри Средне-Теплое ялĕнче пурăнаканскер, çапла пĕлтернĕ: «Çул çинче нимĕç салтакĕсем пире хĕнетчĕç. Пирĕн подростоксем станцире шыв ĕçме чупса тухсан, вĕсене салтаксем хĕнесе тăкнине эпĕ хам куртăм. Мобилизациленĕ хĕрачасене те хĕнетчĕç, вĕсене вагонсене хăваласа кĕртетчĕç те замокпа питĕрсе илетчĕç. Германири гражданла халăх пирĕнтен мăшкăллатчĕ, куçа хăйăр сапатчĕ тата чулсемпе перетчĕ, ачасем вара пирĕнтен «вырăс сыснисем» тесе кулатчĕç. Пирĕн эшелон çул çинче 12 талăк пулчĕ. 1942 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче эпир нимĕçсен Галле хулине çитрĕмĕр. Эпир çитсенех пире йĕркене тăратса тухрĕç, нимĕç улпучĕсен майрисем пычĕç те хăйсене валли чуралăха хĕрачасене суйласа илме тытăнчĕç».

Çапла ĕнтĕ, çакна уççăнах палăртнă тесе шутламалла: нимĕçсен фашистла влаçĕсем, миллионшар чурасем тупма хăтланса, советăн

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. МОЛОТОВ юлташ янă нота

ЮЛАШКИ.

гражданла халăхне тискеррĕн ирĕксĕрлеççĕ тата советăн тытса илнĕ гражданĕсене нимĕç чуралăхне янă чухне питĕ йывăр условисем туса хураççĕ, çав условисене пула совет çыннисен чылай пысăк пайĕ çул çинчех выçăхса, хĕненипе тата çынсене Германие илсе кайнă чух вылъăхла условисем туса хунине пула вилсе пĕтет.

III.

Нимĕçсен фашистла пусмăрлăхĕнче совет гражданĕсене этемле мар хĕн кăтартса вĕлерни

Германие хăваласа кайнă çĕршер пин совет гражданĕсем валли гитлерла чурахуçисем авалхи чуралăх стройĕн чи начар вăхăчĕсенчи пек те мар хăрушăрах условиллĕ каторгăлла йĕрке туса хунă. Совет гражданĕсене концентрациллĕ лагерьсене хăваласа пухнă, лагерьсене йĕплĕ пралукпа тытса тухнă. Совет çыннисене ĕçе илсе кайнă чух тата каялла илсе килнĕ чух колоннăсемпе, хĕçпăшаллă гитлеровецсем сыхласа пынипе илсе пыраççĕ. Совет çыннисене ятсăр тăратса хăварнă, вĕсене номерсем тăрăх çеç чĕнеççĕ. Вырăссемпе украинецсем ятарласа тунă знаксем илеççĕ: вырăссен знакне йĕри-тавра шурă лентăпа карса çавăрннă тата варринче «ост» тесе çырнă; украинецсем те çавăн пек знаках çакса çÿреççĕ, анчах вĕсен знакне йĕри-тавра сарă лентăпа карса çавăрннă. Совет гражданĕсем лагерьтен тухма пултараймаççĕ. Чуралăха кĕртсе ÿкернĕ совет çыннисем валли выçă режим туса хунă. Геринг çÿлте асăннă хăйĕн кăтартăвĕсенче çакăн пек тума хушнă:

«Вырăс тиркесе тăмасть, çавăнпа та ăна хамăрăн апат-çимĕç балансне палăрмалла пăсмасăрах тăрантарса пурăнма çăмăл. Ăна иртĕхтерме тата нимĕç апатне хăнăхтарма кирлĕ мар».

Нимĕçсен фашистла хаçачĕсенче хăйсенче те Германире совет гражданĕсем мĕнле пурăнни çинчен çырса кăтартнисем тĕл пулаççĕ. Сăмахран, «Франкфуртер Цейтунг» хаçатра 1942 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче çакăн пек çырса пĕлтернĕ:

«Советăн оккупациленĕ облаçĕсенчен килнĕ рабочисем йĕплĕ пралукпа тытса çавăрннă лагерьте пурăнаççĕ. Харьков районĕнчен Германие турттарса килнĕ çак çынсене, паллах, çирĕп йĕркере тытса усрамалла, вĕсене сыхласа тămалла, мĕншĕн тесен вĕсем хушшинче саботаж тума пултаракан большевиксем пулмĕç тесе шанса тăма нимĕнле май та çук. Вĕсен чи çывăх начальникĕ... авторитета чăпăркка пулăшнипе тытса тăрать».

Пирĕн çынсем нимĕç каторгинче этемле мар асапланнине вĕсем хăйсен тăванĕсем патне çырнă çырусем питех те хăрушла кăтартса параççĕ.

«Аннеçĕм,—тесе çырать Нона Г. 1942 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче нимĕç лагерĕнчен, — çанталăк кунта начар, пĕрмаях çăмăр çăвать. Эпĕ çарауран çÿретĕп, мĕншĕн тесен манăн тăхăнмалли çук. Кĕлмĕç пекех çÿретĕп. Çăкăр кунне икĕ хут çĕршер грамм илетпĕр. Кунне 12 сехет ĕçлетпĕр. Аннеçĕм, кунта питех те кичем. Заводпа бараксемсĕр пуçне урăх нимĕн те пĕлместпĕр. Ĕçрен килетĕп те кровать çине йăванса каятăп, тăраничченех йĕретĕп, хамăрăн киле тата Сире аса илетĕп, вара çывăрса каятăп. Кунта кĕске вăхăт хушши пурăнсах эпир пурте вăйран тухрăмăр, çывăрса тăранаймастпăр, çисе тăранаймастпăр. Пĕчĕк пÿлĕмре эпир 16 çын пурăнатпăр, пурте украинкăсем тата эпĕ. Хăçан та пулсан курăнма тĕл килсен, пурин çинчен те каласа парăп. Анчах пĕр-пĕрне кураймăпăр çав, мĕншĕн тесен хăмасенчен çапса тунă çуллахи бараксенчех хĕл каçмалла пулать. Çакăн пек апатпа, тата çывăраймасăр пурăнса, тата çипуççăр çÿресе эпĕ тÿссе иртерейĕмĕп. Май килет пулсан, манăн ыйтăва пурнăçа кĕртме тăрăшăр, ыхрапа сухан ярса парăр, мĕншĕн тесен кунта пĕрмаях пĕр апат çитереççĕ. Манăн ĕнтĕ шăл тунисем ыратма пуçларĕç, цынга чирĕ пуçланать».

Тепĕр çырура, 1942 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче, советăн çав хĕр ачиех çапла çырать: «Пирĕн пурнăç, аннеçĕм, йытă пурнăçĕнчен те начартарах. Ĕлĕкхи пекех темле симĕс яшка параççĕ, ăна никам та çимест. Пĕрмай шухăшланине пула манăн миме типсе ларчĕ тата куççулĕсене пула куççем курма пăрахрĕç. Паян 12 сехет хушши выçăллах ĕçлерĕмĕр. Анчах темĕнле йĕрсен те ĕçлес пулать... Кунран-кунах выçă пурăнакан çын мĕнле ĕçлетĕр-ха. Начальник килет те, аякра ларакан нимĕç хĕрарăмĕ хăвалама тытăнать: «Нона, арбайтен шнеллер, шнеллер!» («Нона, хăвăртрах, хăвăртрах ĕçле!»). Хаклă аннеçĕм, сирĕнсĕр мана питех те йывăр, эпĕ йĕрмесĕр чăтса тăма пултараймастăп. Эпĕ хурлăхса макăратăп. Ой, кунтан начартараххисем те нумай, кунтан йывăртараххи те нумай, анчах эпĕ çырса кăтартма пултараймастăп... Эпир ĕнтĕ хăнăхса çитрĕмĕр — икĕ сехетре çĕрле алăк уçăлса каять, полицей çутă çутса ярать те кăшкăрать: «ауф-шэен!» («Тăрăр!»). Пурте тăратпăр та тула тухатпăр... Пĕр сехет тăратпăр. Пире шутлама тытăнаççĕ. Килкартинче иккĕмĕш сменăна кĕтетпĕр. Унта тăнă чухне шăнатпăр. Питĕ йывăр çав, пурте çарауран. Тепĕр чухне тата вăйлă çăмăр çăвать е сивĕ пулать. Мĕнпур хĕн-хурсемпе асапсем çинчен çырса пама та эпĕ вăй çитерейместĕп... Анне, эпĕ ывăнса çитрĕм. Пире хулана кăлармаççĕ, вăрманта пурăнатпăр. Пире урăх завода куçармалла тесе каланине илтрĕмĕр. Халĕ украинецсемпе, французсемпе тата сербсемпе пĕрле ĕçлетпĕр. Анне, май килет пулсан, посылка — суханпа ыхра — ярса парăр, манăн цынга чирĕ пуçланчĕ. Манăн ыйтăва ĕçе кĕртме тăрăшăр».

Ворошиловград облаçĕнчен Германие илсе кайнă хĕрача Маша Н. хăйĕн амăшĕ патне çапла çырать:

«Сывă-и манăн хаклă та юратнă аннем. Сан пата тăваттăмĕш çыру çыратăп, анчах нимĕнле ответ та çук. Анне, эпĕ хуçа патĕнче пурăнатăп. Çемье пĕчĕк: вĕсем иккĕшĕ тата пĕр ача, анчах ĕçĕ, аннем, çителĕклех. Пĕтĕмпе 8 пÿлĕм тата коридор пур. Ирхине 5 сехетре тăратăп, выртасса эпĕ 10 сехетре çĕрле выртатăп. Анне, кашни кунах эпĕ ирхине те, каçхине те кĕпе-йĕм çăватăп. Хуçа яланах кăшкăрать, эпĕ унтан питĕ хăратăп, çавăнпа эпĕ тĕлĕкре те хăраса кăшкăрса яратăп. Кунта пурăннă пĕтĕм вăхăт хушшинче те пĕр хут кăна, вырсарни кун, мана хамăраннисем патне лагере ячĕç. Эпĕ каялла çур сехет каярах юлса килтĕм. Анне, мĕн тери хĕнерĕ мана хуçа, çÿçрен туртрĕ, çакна эпĕ ĕмĕрте те манмăп. Анне, мана уйăх ĕçленĕшĕн 7 марка та 50 пфениг тÿлерĕç. Эпĕ хамăн юлашки çи-пуçа тăхăнса çÿретĕп, вĕсем мана нимĕн те памарĕç. Анне, пире киле çырусем яма хушрĕç, килтисем пире валли пальто, çăматă ярса паччăр, терĕç. Ылттăн аннем, сире хĕсĕç, анчах кунта нимĕн те ан ярăр, пурпĕрех эпĕ илейместĕп. Мĕн тăвас манăн? Киле ямаççĕ, анчах урăх тÿсме вăй çук. Кашни кунах макăратăп, манăн пĕр çул кăна юлать пулĕ: хама-хамăн вĕлермелле пулать пулĕ. Анне, тăванăм, мана чĕррĕн курас тетĕн пулсан, мана кунти пусмăрлăхран хăтар. Эпĕ малашне те çакăн пек тÿссе пурăнма пултараймастăп. Анне, тăванăм, çакна тума тăрăш. Чĕрĕ юлсан, эпĕ сана уншăн тав тăвăп. Ну, аннем, урăх çырма пултараймастăп, куççулĕ капланса килчĕ. Тăвансене пурне те чуптăватăп. Халлĕхе сывă юлăр. Санăн хĕрÿ — Маша».

Совет хĕрачи Надя Л. Хемниц хулинчен тăван çĕршывне çапла çырать: «Хаклă аннем! Эпир баракра 60 çын пурăнатпăр, улăм çинче çывăратпăр. Çак баракра питĕ сивĕ. Ĕçлеме эпир пир-авăр фабрикине çÿретпĕр. Ирхине 6 сехетрен пуçласа каçхине 9 сехетчен ĕçлетпĕр, çиме пире ирхине пĕр тарелка вĕретнĕ шыв тата 50 грамм çăкăр параççĕ, кăнтăрла яшка çăкăрсăр çитереççĕ, каçхине те яшка çеç çитереççĕ. Кунсăр пуçне ĕçре ирхине 25 грамм тата кăнтăрла 25 грамм çăкăр параççĕ. Апат-çимĕç, хаклă аннем, начартарах, анчах киле янă пулсан ку та аптăрамĕччĕ. Эпир сирĕн çырăва, аннем, илтĕмĕр те макăртăмăр. Хам пусмăрлăхра пурăннă пирки эпĕ питĕ хуйхăратăп. Çутçанталăка курмастăп, хамăрăн хăрушă бараксăр пуçне урăх нимĕн те курмастăп. Ĕçе кайнă чух тата унтан килнĕ чух пире чурасем пекех илсе çÿреççĕ».

Маня К. ашшĕ патне çапла çырать: «Эпир Германире Бланкенбург хулинче пурăнатпăр. Хуçа патĕнче вăтăр виççĕн ĕçлетпĕр. Кунта украинецсем те, поляксем те, французсем те тата вырăссем те пур. Пире начар çитереççĕ. Çăкăр питĕ сахал параççĕ, ĕçĕ май таранах. Пире надзиратель сыхласа тăрать. Пирĕн кашни утăмах асăрхаса тăраççĕ, ниçта та ямаççĕ. Ĕçе çеç яраççĕ. 12-шер сехет ĕçлетпĕр, анчах ĕçе тăхăнса каймалли нимĕн те çук. Укçа халлĕхе пире памаççĕ. Хаклă аттем, пусмăрта пулса, кам валли тата мĕншĕн ĕçленине пĕлмесĕр ĕçлеме мĕн тери, йăлăхтарса çитерчĕ. Пирĕн ĕçе нимĕн чухлĕ те хакламаççĕ. Пире пурте йĕрлеççĕ тата пирĕнтен кулаççĕ. Çунатсем пулнă пулсан, тăван киле вĕççе пынă пулăттăм».

Курск нимĕçсен аллинче пулнă чухне Ф. И. хĕр унта хăйĕн ашшĕ-амăшĕсем патне çапла çырнă: „Германире эпир—тытса хупнă çынсем. Эпир питĕ начар пурăнатпăр. Хирте ĕçлетпĕр. Кунне икĕ хут апат çиетпĕр: ирхине 200 грамм çăкăр, кăнтăрла пĕр турилке шÿрпе параççĕ. Ĕç питĕ нумай. Эпĕ Германие килнĕшĕн çав тери ÿкĕнетĕп. Пирĕн хуçан 28 çын: вырăссем, поляк хĕрарăмĕсем, француз хĕрарăмĕсем. Кунсăр пуçне, 15 поляк хĕрĕ тепĕр хуçа патĕнче ĕçлеççĕ, анчах вĕсем пирĕн хуçа патĕнче çывăрса, апат çисе пурăнаççĕ. Эпир Катяпа пĕрле пурăнатпăр, пĕр кровать çинче çывăратпăр. Анне, эпир Германире спасибăшăн ĕçлетпĕр. Хам çире мĕн пулни çĕтĕлсе пĕтрĕ, урăх ниçтан та илме çук, укçа та çук. 4 уйăх ĕçлерĕмĕр те пĕр пус та илмерĕмĕр. Эпир тĕрмере пурăнатпăр. Пĕр сăмахпа каласан ĕнтĕ, эпир мĕнле пурăннине хăвăр тавçăрса илĕр".

Штутгарт хулинчи лагерьтен 1943 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче Леонид Д. Курск облаçĕнчи Щигры хулине çапла çырнă: „Сывă-и манăн тăвансем—атте, анне, Гая, Ваня тата шăллăм Юрик. Чи малтан эпĕ сире хамăн пурнăç çинчен тĕплĕн çырса пĕлтересшĕн. Хаклă тăвансем, эпир Германие килсессĕн, валеçекен лагерьте пире ушкăнсене уйăрчĕç те çавăнтан вара эпĕ хамăн йăмăкран Зояран уйăрăлса кайрăм, ăна вара урăх курман. Юратнă аннем, эпир тасамар çÿрерĕмĕр, икшер уйăх шыва кĕмен, пыйтăсене тăрантарса пурăнтăмăр. Завод лагерьтен 5 километрта, начар апат çисе пурăннипе эпĕ аран-аран кăна утталатăп, çапла ĕнтĕ Германири пурнăç ĕмĕр-ĕмĕрех асран каймĕ. Чĕрĕ юлса киле таврăнсан, сире пĕтĕмпе каласа парăп, сирĕн вара, юратнă тăвансем, çÿçĕрсем вирелле тăрĕç. Эпĕ хама-хам вĕлерме шутланăччĕ, анчах çаплах вĕлермерĕм, пирĕншĕн лайăх вăхăт килсе çитĕ тесе шухăшлатăп. Хаклă аннем, манăн çунатсем пулас пулсан, кунтан вĕçейсе кайăттăмччĕ".

17 çулхи Нина С. 1942 çулхи августăн 18-мĕшĕнче ют çĕртен хăйĕн тăван çĕршывне çапла çырнă: „Хаклă атте-аннесем, эпĕ Зонненберг хулинче, баракра пурăнатăп, фабрикăра ĕçлетĕп. Ытла та йывăр! Эпĕ йăлтах начарланса çитрĕм. Анне, эпир кунта тĕрмери пек, решеткесем хыçĕнче пурăнатпăр. Манăн туфли çĕтĕлчĕ ĕнтĕ, эпĕ халь ĕçлеме çарран çÿретĕп... Пурăнма мĕн тери йывăр! Ох, мĕнле чăтса ирттерĕп-ши эпĕ çаксене..."

Нимĕç каторгинче сывлăхсăр пулса юлса хăйĕн тăван çĕршывне таврăннă Филипп Боцман çапла каласа парать:" ...Мироновка ялĕн Германие яма 20 çын çамрăк арçынсемпе хĕрсене тăратмалла пулнă. Çамрăксене урамрах тытатчĕç, çĕрле вырăн çинче выртнă çĕртен илсе каятчĕç. Мана икĕ хутчен тарса пытанма май килчĕ, виççĕмĕш хутĕнче мана тытрĕç, вагона лартса питĕрсе хучĕç. Ыттисемпе пĕрле эпĕ Берлина çаклантăм. Йĕри-тавра çÿллĕ хÿме тытса çавăрннă сивĕ казармăна темиçе çĕр çынна хăваласа кĕртрĕç. Эпир чул урайĕнче выртса пурăнтăмăр. Эпĕ çар валли тумтирсем хатĕрлекен пир-авăр фабрикине лекрĕм. Унта французсем, тыткăна лекнĕ поляксем, испанецсем ĕçлетчĕç. Нимĕç мастерĕсемпе надзирателĕсем пуринчен ытла вырăссене шанмасчĕç, пуринчен ытла вĕсем пирки тиркешетчĕç. Пăртакшăнах алăпа çапатчĕç, вăрçатчĕç. Пуçа çĕклемесĕр, пĕр чĕнмесĕр ĕçлеттĕмĕр. Апат цехрах паратчĕç, апат — çĕрулми хуппи ярса пĕçернĕ пĕр турилке сивĕ шÿрпе. Çав апат тĕлне çăкăр юлмасчĕ. Тĕрлĕ япала хутăштарса пĕçернĕ 300 грамм çăкăра ирхинех çисе яраттăмăрччĕ. Каçхине каялла казармăна хăваласа каятчĕç. Кашни кун çаван пек иртетчĕ. Ывăнса çитнĕ, выçă, кичем. Орел облаçĕнчен килнĕ пĕр хĕр, надзирательсем хĕнесе пĕтернĕскер, çакăнса вилчĕ. Хăшĕ-пĕри тарма хăтланатчĕç, анчах та тарма питĕ йывăрччĕ—сана чи малтан тĕл пулнă нимĕçех вырăс иккенне пĕлсе тытса парать. Таркăнсене тытас ĕçре нимĕçсем йытăсемпе усă кураççĕ. Выçлăхпа йывăр ĕç манăн сывлăха йăлтах пĕтерсе хучĕç."

Преступникла гитлерла правительство Германие хăваласа кайса вилмелле туса хунă совет çыннисене этем чăтмалла мар условисенче пурăнтарни çинчен нимĕçсен йышлă официальнăй приказĕсемпе инструкцийĕсем тата совет гражданĕсем Германирен яракан çырусем кăна мар каласа параççĕ, ун çинчен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çапăçакан нимĕç çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем патне нимĕçсем яракан çырусем те каласа параççĕ.

Нимĕçсен 221-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи вилнĕ нимĕç салтакĕ Вильгельм Бок çумĕнче унăн амăшĕ Хемницран янă çырăва тупнă. Унта çапла каланă:

„Астра Верке" фабрикисенче нумай вырăс хĕрарăмĕсемпе хĕрĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсене кунне 14-шар сехет тата ытларах та ĕçлеттереççĕ. Вĕсене ĕçшĕн, паллах ĕнтĕ, ĕçукçи нимĕн чухлĕ те тÿлемеççĕ. Вĕсене ĕçлеме кайнă чухне те, ĕçрен таврăннă чухне те хуралласа пыраççĕ. Вырăссем ытла та ывăнса çитнĕ, вĕсем уraран ÿкеççĕ. Вĕсене хурал час-часах хулăсемпе çаптарать. Хĕнени çинчен тата начар апат çитерни çинчен жалоба пама вĕсен право çук. Манăн кÿршĕ çак кунсенче работница туянчĕ. Вăл кассăна укçа хывнă та ăна Российăран тин кăна хăваласа килнĕ хĕрарăмсенчен хăшне илес тенĕ çавна суйласа илме ирĕк панă".

Элин Шиллинг салтак патне Пуфенгаузенран 1942 çулхи августăн 10-мĕшĕнче Лотта Меллер çапла çырнă: „Нумаях пулмасть кунта, Пуфенгаузена, вырăссем килчĕç. Пирĕн пурнăç малашне интереслă пулмалла: пĕр кĕсъересловарь, тепринче—револьвер".

Пиншер совет гражданĕсем чуралăхри тискер условисене тÿсейменĕç. Лагерьсенче питĕ нумайĕшĕ вилеççĕ.

Нимĕçсен 32-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 4-мĕш полкăн 6-мĕш ротинчи Отто Теск салтак патне 1942 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче Деммин округĕнчи Альтентрептов патĕнчи Гюльтецрен Фрида Путц çапла çырнă:

„... Кунта юнкун каллех икĕ вырăса пытарчĕç. Кунта масар çине 5 вырăса пытарнă ĕнтĕ, халĕ тата 2 çын вилес патне çитнĕ. Тепĕр енчен тата вĕсен пурăнмалли те çук, вĕсене пурне те персе вĕлерес пулать..."

Германин преступникла правительстви чуралантарнă совет гражданĕсене сутас тата сутăн илес ĕçе организациленĕ. Кашни çыншăн 10—15 маркăран ытла мар укçа тÿлесе, кашни нимĕç хăй валли чура илме пултарать. Германире ирĕксĕрлĕхре пурăнакансен рынокĕсем тунă. Кунта чуралăх стройĕ вăхăтĕнчи пек, чура илекенсем чуралăха сутакан совет гражданĕсен аллисемпе урисенчи мускулĕсене тытса пăхаççĕ, начартарах чурасем вырăнне вăйлăраххисене улăштарса илеççĕ.

Иосиф Виккерт унтер-офицер патне (п/п № 261.873) унăн арăмĕ Мария Виккерт Франквелертан çапла çырать:"...Эсĕ янă 100 маркăна илни çинчен эпĕ сана пĕлтерменччĕ-ха. Эпĕ вăл укçана çийĕнчех сан аннÿне тыткăнрисене сутăн илме тесе патăм. Халĕ ку япала ытла та хаклă".

Старши ефрейтор Франц Кнапп патне (п/п № 08.999) Груммран Ангальтăна унăн арăмĕ Рут Кнаппе çапла çырать: „...Манăн украинец çук ĕнтĕ... Вăл нимĕн те итлесшĕн пулмарĕ, питĕ наян пулчĕ. Халь вăл Герберг патĕнче ĕçлет. Эпир пысăкрах хуçалăхра майлăрах пулмĕ-и тесе пăхасшăн пултăмăр, анчах вăл пысăк хуçалăхра та çавăн пекех иккен. Эпĕ кун çинчен Ĕç бюровне телефонпа пĕлтертĕм. Анчах та вĕсем хăçан тата тепĕр транспорт килессине калаймарĕç. Герберг çав çынна хăй патĕнче усрать-ха, унтан вара вăл ăна улăштарать".

Чура хуçисем совет гражданĕсене этем тÿсмелле мар асап кăтартаççĕ, эксплоатацилеççĕ. Совет гражданĕсене ирччен сивĕ кладовойсемпе сарайсене хупса хураççĕ. Вĕсене питĕ сахал çитереççĕ, йывăр ĕçпе асаплантараççĕ. Совет çыннисенчен мăшкăллаççĕ, вĕсен этем туйăмне пусарса лартаççĕ. 12 çулхи хĕр Валя Демушкина Нюренбергран хăйĕн тăван çĕршывне таврăннă. Вăл çапла каласа панă: „Эпĕ нимĕç хĕрарăмĕ патĕнче ĕçлерĕм. Унăн упăшкине—Карл Штокк обер-лейтенанта Хĕвелтухăç фронтĕнче, Сталинград патĕнче вĕлернĕ. 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче çав Штокк хĕрарăм патне çĕнĕ çул ячĕпе апатланма хăнасем пухăнмалла пулнă. Хĕрсе ĕçлесе тата хавас мар шухăшсем шухăшласа, эпĕ сисмен те: кухарка лартнă сĕт вĕреме тытăннă та электричество плити çине юха пуçланă. Кухньăра ĕнĕк шăрши сарăлнă. Асар-писер çиленнĕ улпут арăмĕ кухньăна чупса кĕчĕ те ман алăран кастрюльăна туртса илсе юлашки сĕте манăн пит çине сапрĕ. Эпĕ ăнсăр пултăм. Больницăра тин тăна кĕтĕм, питĕ хытă ыратнине туйса илтĕм. Эпĕ суккăрлантăм. Больницăра виçĕ эрне выртрăм, унтан хамăн тăван çĕршыва темĕн чухлĕ вăхăт хушши каймалла пулчĕ".

Ворошиловград облаçĕнчи пĕр вăтам шкулăн 9-мĕш класĕнче вĕренекен 16 çулхи хĕр Надя С. çапла çырать: Нимĕçсем пирĕн çамрăксене пурне те тенĕ пекех Германие каторгăлла ĕçе ирĕксĕр хăваласа кайрĕç. Вĕсене ăсатнă чухне вокзалта питĕ хытă макăрчĕç. Каяканнисем те, ăсатаканнисем те макăрчĕç. Мана тата 16 хĕре швац хулине ячĕç. Унта вырăс çыннисемпе чăннипех сут тунă. Нимĕçсем те нимĕç хĕрарăмĕсем пире çавăра-çавăра пăхатчĕç, виçетчĕç, хыпаласа пăхатчĕç. Мана булочник Карл В. илчĕ. Вăл мана ирхине 6 сехетрен пуçласа тĕттĕм пуличченех ĕçлеттеретчĕ. Эпĕ булочник патĕнче пурăнтăм пулин те, çăкăр сайра-хутра кăна çинĕ. Кашни кун эпĕ урай çăваттăм, ирхине те каçхине те кĕпе-йĕм çăваттăм, ачасене пăхаттăм, вĕсене тумлантараттăм. Фрау ытла усалах пулмарĕ—е тĕртетчĕ, е чĕпĕтетчĕ, е пуçран çапатчĕ, анчах ытла ыратмалла мар. Çакă вара питĕ кÿрентеретчĕ: эпĕ 8-мĕш класра вĕреннĕ, француз чĕлхине, историне вĕреннĕ, а кунта, Рим пуç пулса тăнă тапхăрти пек, хам чура пулса тăтăм. Ытла йывăр ĕçленипе, выçă пурăннипе тата хĕненипе эпĕ чирлерĕм. Пăртак сывалсан, хамăн тăван çĕршыва тартăм. Брест-Литовскра мана тытрĕç те концлагере хупрĕç. Çав лагерьте çурри ишĕлнĕ сарайсенче пиншер совет гражданĕсем асапланса пурăннă. Çав лагерьтен кулленех 10—15 виле йăтса тухатчĕç.

Нимĕç чура хуçисем хăйсем совет çыннисене тискеррĕн тыткаланипе час-часах уççăнах мухтанаççĕ. Подрядчик Лоренс Шпеер хăйĕн пуçани Иозеф Шпеер салтак патне çапла çырать: „Пирĕн патăрта халь 19 çулхи украинка ĕçлет. Ан пăшăрхан—вăл ĕçлет. Вырсарникун пирĕн яла тата 20 вырăса илсе килеççĕ. Эпĕ хам валли темиçе вырăса илĕп...". Нимĕçсен 7-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ефрейтор Вильгельм Гаусман хăйĕн амăшĕнчен Швейхаузенран çыру илнĕ. Унта çапла каланă: „Пирĕн сĕт ферминче те 6 вырăс пур. Çĕрле вĕсене питĕрсе лартаççĕ. Вĕсем хушшинче 14—15 çулхи ачасем пур. Ан пăшăрхан, вĕсем ĕçлеме пултараççĕ".

81-мĕш пехотнăй дивизири 187-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчи Герберд Шплетт лейтенанта Теплиц-Шанауран (Судет облаçĕ) фрау Сузи Краммер 1942 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче çапла çырнă: „Пирĕн пата сăра туса тăма 10 вырăса яраççĕ. Эпĕ вăл бандăна хăвăрт çавăрăнкалаттарăп. Эпĕ нимрен ытла мĕнпур вырăссене персе вĕлерĕттĕм".

Нимĕç чуралăхне ирĕксĕр хăваласа кайнă пиншер совет гражданĕсем выçăпа, сивĕпе, вăй çитерейми ĕçпе тата хĕненипе вилсе пыраççĕ. Чура хуçисем этемле мар тискеррĕн тыткаланипе аптăраса çитсе, нумай совет гражданĕсем хăйсене хăйсем вĕлернĕ. Совет çыннисем нимĕçсем патĕнче чуралăхра пурăниччен вилме килĕшнине кăтартса паракан вырăнсем нимĕç çырăвĕсенче нумай тĕл пулаççĕ. Акă 121-мĕш пехотнăй дивизири 405-мĕш полкри обер-ефрейтор Рудольф Ламмермайер çумĕнче, Ленинград патĕнче вилнĕскер çумĕнче, тупнă çыру. Вăл çырăва унăн амăшĕ Люгде местечкинчен çырса янă:

„Ĕнер пирĕн пата Анна Лиза Ростерт чупса килчĕ. Вăл питĕ çилленнĕ. Вĕсен сысна витинче вырăс хĕрĕ çакăнса вилнĕ. Пирĕн работницăсем—поляк хĕрарăмĕсем—çапла калатчĕç: Фрау Ростерт вырăссене ялан хĕнет, вăрçать, тетчĕç. Çав хĕр кунта апрель уйăхĕнче килнĕ, вăл ялан куççуль юхтарса çÿретчĕ. Йăлтах аптăраса çитнĕ вăхăтра çакăнса вилнĕ пуль вăл. Эпир Фрау Ростерта çапла каласа лăплантартăмăр: нумай мар укçа тÿлесе тепĕр вырăс работницине илме пулать вĕт, терĕмĕр".

IV.

Ирĕксĕр хăваласа кайнă совет гражданĕсене этемле мар эксплоатациленишĕн айăплă пулса тăракан Германи влаçĕсемпе Германи гражданĕсен ответлăхĕ

Малта кăтартнисем тăрăх тата хăйĕн аллинчи документсем тăрăх Совет Правительстви çакна иккĕленмелле мар çирĕп пĕлсе çитнĕ тесе шутлать: Германин гитлерла правительстви, халăхсемпе уйрăм çынсен яланхи прависене те пăсса, ак çакăн пек халиччен курман-илтмен преступленисем тунă тата халĕ те тăвать:

улталаса, хăратса тата пусмăрласа мирлĕ совет гражданĕсене çĕршер пин çынна, çав шутра çамрăк ачасене, çитĕнсе çитменнисене, хĕрарăмсене, Германие чуралăха хăвала-хăвала каяççĕ;

хăваласа каякан мирлĕ граждансем валли пĕр правăсăр чурасен режимĕ тата вăй çитерейми ĕç режимĕ туса хураççĕ;

совет гражданĕсене Германире предприятисемпе уйрăм çынсене чуралăха сутаççĕ, вĕсене тĕрлĕ майпа çын шутĕнчен кăлараççĕ тата асаплантараççĕ, выçă пурăнтараççĕ, майĕпен асапланса вилмелле туса хураççĕ.

Вăрçă вăрçмалли правилăсене çав тери вăйлăн пăсса тунă ирсĕр преступленисемшĕн пĕтĕм ответлăха Совет Правительстви власть пуçĕнче тăракан гитлерла шайка çине тата нимĕçсен фашистла çарĕн командованийĕ çине хурать.

Совет Правительстви малта кăтартнă преступленисемшĕн тата Германие яма çын пухакан, вĕсене илсе каякан, турттаракан, лагерьсенче усракан, чуралăха сутакан тата тăван çĕршывран Германие ирĕксĕр илсе кайнă мирлĕ совет гражданĕсене этемле мар эксплоатацилекен чиновниксем те пĕтĕмпех айăплă тесе шутлать. Çакна шута илсе, Совет Правительстви тата тăрă шыв çине кăларнă çак преступниксем те гитлерла Германан пуçлăхĕсем пекех пысăк ответ тытмалла тесе шутлать: „ĕç вăйĕпе усă курассин главнăй уполномоченнăйĕ" гаулейтер Фриц Заукель тата тытса илнĕ совет çĕрĕсенчи гитлерла наместниксем: „Украинăн рейхскомиссарĕ" Эрих Кох, „Остланд рейхскомиссарĕ" (Литва, Латви, Эстони тата Белорусси Совет республикисен территорийĕсен рейхскомиссарĕ) Гейнрих Лозе тата унăн помощникĕ—„Белоруссин генеральнăй комиссарĕ" Вильгельм Кубе, çавăн пекех тата нимĕçсен фашистла чура хуçисене шухăшпарса хавхалантарса тăракан Альфред Розенберг, „Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ облаçсем тĕлĕшпе ĕçлекен имперски министр" пулса ĕçлекенскер.

Совет Правительстви çакăнпа пĕрлех тата мирлĕ совет гражданĕсене хăйсен предприятийĕсенче е килти хуçалăхĕнче этемле мар эксплоатацилекен уйрăм çынсем çине те тулли ответлăх хурать. Совет çыннисене калама çук нумай асаплантарнăшăн çав уйрăм çынсен ответ тытмалла.

Нимĕçсен фашистла влаçĕсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлмешкĕн Совет Союзĕнче организациленĕ Чрезвычайнăй Государственный Комисси совет çыннисене нимĕç чуралăхне хăваласа кайнă фактсене туллин тата тĕрĕс хисепе илсе пырать. Нимĕçсен фашистла пусмăрлăхĕнче совет гражданĕсене этемле мар эксплоатациленĕшĕн тата вĕсем вилнишĕн айăплă гитлерла чиновниксене тата Германири уйрăм çынсене Чрезвычайнăй Государственный Комисси кашнине уйрăмăн шута илсе пырать.

Совет Правительствине тата Совет Союзĕнчи халăхсене çакă та лайăх паллă: совет гражданĕсемсĕр пуçне тата Европăри гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсенчен миллионшар мирлĕ çынсене вăйпа тата улталаса нимĕçсен фашистла пусмăрлăхне хăваласа кĕртнĕ. „Тотальнăй мобилизаци" тенипе шавласа гитлеровецсем Польшăри, Чехословакири, Югославири, Францири, Бельгири, Грецири, Норвегири, Голландири çĕршер пин мирлĕ граждансене хăйсен чурисем туса хума тăрăшаççĕ. Çав çĕршывсенчи халăхсем гитлерла Германие чăсрах аркатса тăкассине тата хăйсен вилĕмле тăшманĕ пулса тăракан гитлерла государствăна пĕтерсе тăкассине Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле хăйсен пĕтĕмĕшле задачи тесе шутлаççĕ.

Гитлерла правительствăна тата унăн агенчĕсене хăйсен тискер преступленийĕсемшĕн, нимĕçсен фашистла чуралăхне ирĕксĕр хăваласа каякан миллионшар мирлĕ граждансене асаплантарнăшăн тулли ответ тыттармалли, вĕсене пысăк наказани памалли шухăшпа пур правительствăсем те килĕшеççĕ тесе Совет Правительстви шанса тăрать.

Йышăнăр т. ыт. те.

В. МОЛОТОВ.

Мускав, 1943 çулхи майăн 11-мĕшĕ".

Культмассăллă ĕçе аван йĕркеленĕ

ШАХАСАН. Туçи Чуринăри «Правда» колхозра çураки вăхăтĕнче культмассăллă ĕçе аван туса пыраççĕ. Çуракине тухнăранпа кашни бригадăрах 5-шер номер стена хаçачĕ кăларнă. Çавăн пекех колхозри стена хаçачĕ те йĕркеллĕ тухса тăрать. Çураки вăхăтĕнчи культмассăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ Герасимов тăрăшса ĕçлет. Агитаци ĕçне туса пыма кашни бригада çумнех комсомолецсене çирĕплетнĕ.

Н. Павлов.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

КТ 1054 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф, б. 58. 42 п.